Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

57 (8121) № * Юн кун, 2013 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 7-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Юман Раççей хӳтлĕхне кĕчĕ



Хамăр вăрмансенчи юман мăнаçлăхĕ, илемĕпе хăвачĕ чăваш çыннине ĕмĕртенех тĕлĕнтернĕ тата савăнтарнă, хăйне хисеплеме ыйтнă. Çынна ырă сунакан мăн асаттесемех тăван-пĕтене, кӳршĕ-аршăна, пĕр ял çыннисене юман пек çирĕп сывлăх суннă. Пурнăç йывăççи вăл пирĕншĕн. Халăхăмăр юмана таса йывăç тесе хаклани чăваш халăхĕн ялавĕпе гербĕ çинче те йĕр хăварнă.

Çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Ильинкăри участок лесничествин юманлăхĕнчи «Чăваш юманлăхĕн старейшинине» (Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн 1981 çулхи ака уйăхĕн 2-мĕшĕнчи 186-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе) федераци пĕлтерĕшлĕ çут çанталăк палăкĕ туса хурса официаллă лару-тăрура «Йывăç – чĕрĕ çут çанталăкăн палăкĕ» статус парас ĕçе хутшăнчĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

## Вĕренӳ тӳлевсĕр пулĕ

**Çĕнĕ саккун**

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетлĕ 14-мĕш сессийĕнче депутатсем Чăваш Республикин «Чăваш Республикинчи вĕренӳ çинчен» Саккунне йышăннă.**

Республикăн вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов палăртнă тăрăх документа республика законодательствине ку тĕлĕшпе йышăннă федераци саккунĕпе шайлаштарассине тĕпе хурса хатĕрленĕ, республикăн экономикăпа социаллă пурнăç, этнокультура, демографи тата ытти уйрăмлăхĕсене шута илнĕ.

Саккунра вĕренекенсен, педагогика ĕçченĕсемпе ашшĕ-амăшĕн хушма прависене, пулăшупа социаллă гарантин мелĕсене палăртнă. Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн шкул çулне çитмен ачасен вĕренĕвĕ, пĕтĕмĕшле пуçламăш, пĕтĕмĕшле тĕп тата пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илесси, професси вăтам пĕлĕвĕ илесси, енчен те гражданин ку шайра пуçласа вĕренет пулсан конкурс мелĕпе аслă пĕлӳ илесси тӳлевсĕр пулма тивĕç. Чăваш тата вырăс чĕлхисене Чăваш Республикин патшалăх чĕлхисем тесе вĕренме условисем туса парĕç.

Шкул çулне çитменнисен вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсене пурнăçа кĕртессине пăхса хунă. 2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса воспитательсене ĕç укçи тӳлеме тата оборудовани туянма каякан тăкаксене республика бюджетĕнчен саплаштарĕç. Ашшĕ-амăшĕ ачана пăхса пурăннăшăн кăна тӳлĕ. Тăкаксен ытти статйисене муниципалитетсен финанслама тивĕç.

Кунпа пĕрлех министерство анлă калăпăшлă задача лартнă: 2013 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур шкулсене те 100 процентчĕпех вĕренӳ кĕнекисемпе тивĕçтермелле.

Саккунра уйрăмах аслă-тăнлă, инвалид ачасене пырса тивекен, шкул форми пирки, çамрăк педагогсемпе ялта пурăнакан педагогсен социаллă гарантийĕсем тĕлĕшпе те çĕнĕлĕхсем пур.

Малтан палăртнă тăрăх çĕнĕ саккуна пурнăçа кĕртме хушма укçатенкĕ 2013 çулта 28,6 млн тенкĕ, 2014 çулта 1280,4 млн тенкĕ, 2015 çулта 1284,2 млн тенкĕ уйăрмалла пулать.

## Кун йĕркинче – ВСМ 2

**Канашлу**

Августăн 2-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăри Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе пуйăссем пысăк хăвăртлăхпа çӳремелли «Мускав – Хусан – Екатеринбург» чукун çул магистральнĕн проектне пурнăçлассин ыйтăвĕсемпе ĕçлĕ канашлу ирттернĕччĕ. Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерствин, Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствин ертӳçисене кĕске вăхăтра чукун çул магистралĕ иртекен «коридора» лекекен çĕр участокĕсем енĕпе туса ирттермелли ĕçсен норматив документчĕн проектне хатĕрлеме хушнăччĕ.

Августăн 5-мĕшĕнче республика Пуçлăхĕ Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе ирттернĕ канашлура та тĕп ыйтусенчен пĕри ВСМ 2 пулнă.

Канашлăва уçнă май Михаил Васильевич Санкт-Петербургри Экономика форумĕнче, çавăн пекех Раççей Президенчĕ Владимир Путин июлĕн 31-мĕшĕнче федераци министрĕсемпе тата «РЖД» ОАО ертӳçисемпе ирттернĕ канашлура та пысăк хăвăртлăхпа çӳремелли «Мускав – Хусан – Екатеринбург» чукун çул магистральне (ВСМ 2) тăвас ыйтăва пăхса тухнине пĕлтернĕ.

Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕн чукун çул магистралĕ иртмелли «коридорти» çĕр лаптăкĕсемпе çыхăннă операцисене йĕркелесе тăрассин ыйтăвĕсемпе çыхăннă йышăнăвне ал пуснине пĕлтернĕ. Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Етĕрне районĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене территорисене планлассипе çыхăннă документсене (муниципалитет районĕсен территори планĕсен схемисене, асăннă муниципалитет йĕркеленĕвĕсен йышне кĕрекен ял (хула) тăрăхĕсен генеральнăй планĕсене) çирĕплетнĕ йĕркепе улшăнусем кĕртме сĕннĕ: проект документацийĕпе килĕшӳллĕн çав хăвăртлăхпа çӳремелли «Мускав – Хусан – Екатеринбург» чукун çул магистральне кăтартас енĕпе.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ магистрале туни республика экономикин аталанăвне палăрмаллах вăй хушасса, инвестицисене явăçтармашкăн, социаллă сферăна çирĕплетмешкĕн хушма хавхалану парасса, туризм илĕртӳлĕхĕ ӳсессе пĕлтернĕ. «2015 çул пуçламăшĕнче строительство ĕçĕсем пурнăçланма тытăнаççĕ, 2018 çулта магистрале ĕçе кĕртмелле. Эппин, пирĕн строительство организацийĕсен субподряд ĕçĕсене хутшăнмашкăн хатĕр пулмалла», – тенĕ Михаил Игнатьев.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министрĕ Михаил Янковский ВСМ 2 строительствин пĕрремĕш тапхăрĕ валли «Мускав – Владимир – Чул хула – Шупашкар – Хусан» лаптăка (унăн тăршшĕ 803 км, вăл федерацин 6 субъекчĕн территорийĕ урлă, çав шутра Чăваш Ен – Етĕрне, Муркаш, Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсем – урлă иртет) суйланине палăртнă.

Канашлура çавăн пекех ытти ыйтусене те сӳтсе явнă.

**Вырма – 2013**

## «Хир карапĕсем» – пусăсенче

Юлашки кунсенчи çумăрлă кунсем çĕр ĕçченне кăçал хăйне евĕр йышăнусем тума хистерĕç. Нумай хуçалăхра тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем турĕç. Уяр кунсемпе туллин усă курса иртнĕ кунсенче районти çĕр ĕçченĕ 2387 гектар (16 процент) çинче вырма ĕçĕсем ирттернĕ. Çак тапхăрта кĕлете пĕтĕмпе 5102 тонна çĕнĕ тырă кĕнĕ. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç паянхи куна районĕпе 21,4 центнерпа танлашать. Уйрăм хуçалăхсенче ку кăтарту самай пысăкрах. Тĕслĕхрен, В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис., «Свобода», «Ударник» хуçалăхсенче вăтам тухăç 26 – 30 центнер.

Ильич яч. хис. хуçалăхра 20 гектар урпа вырнă. Вăтам тухăç 25 центнер.

Хирсенче çак вăхăтра 13 «хир карапĕ» ĕçленĕ.

Район администрацийĕн экономика тата агропромышленноç комплексне аталантарассин пайĕнчен тăратнă оперативлă кăтартусемпе районти çĕр ĕçченĕ çурла уйăхĕн 6-мĕшĕ тĕлне кĕр аки валли 3538 гектар çĕр хатĕрленĕ.

**Строительство ыйтăвĕсемпе**

## 4 çурта тĕпрен юсĕç

Нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерессин ыйтăвĕсемпе Шупашкар хулин администрацийĕн актовăй залĕнче иртнĕ эрнере «çавра сĕтел» иртнĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата общественăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Никитин пĕлтернĕ тăрăх нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерессине 30 çуллăха палăртнă. Çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн кӳ е вăл çурта хăçан юсамаллине конкретлă палăртса хураççĕ.

Кăçал районта 4 çурта тĕпрен юсама палăртнă. Вăл шута Муркашри Октябре 50 çул урамри нумай хваттерлĕ 22-мĕшпе 14-мĕш тата Ленин урамĕнчи 28-мĕш, çавăн пекех Юнкăри Центральная урамри 35-мĕш çуртсем кĕнĕ.

Çак кунсенче нумай хваттерлĕ çуртсен ертсе пыракан компанийĕ конкурс ирттернĕ, кашни объектпах строительство ĕçĕсене пурнăçлакан организацисене палăртнă.

## Çĕнĕ ФАП çĕкленет

Районта кăçал хута каймалли объектсенчен пĕри – Катькас ял тăрăхĕнчи çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ Владислав Данилов каласа панă тăрăх çак кунсенче строительсем çуртăн çине витеççĕ, оборудовани кӳрсе килнĕ. Строительство ĕçĕсене республика Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви финанслать.

Çапах та çывăх вăхăтрах татса памалли ыйтусем те çук мар. Килĕшӳре палăртнă пек район администрацийĕпе вырăнти ял тăрăхĕн администрацийĕ хутшăннипе туса ирттермелли ĕçсен калăпăшĕ пысăк пулни шухăшлаттарать. Фельдшерпа акушер пунктне шыв парса тăрассине, шыв юхтарса кăларассине, газ, электричество кĕртессине, тротуар сарассине, территорие тирпей-илем кĕртессине те кайри ĕçсен шутне хăвармалла мар.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

**Тĕрĕслев**

## Çулсен пахалăхĕ тивĕçтерет-и?

Çак кунсенче «Чувашупрдор» хысна учрежденийĕн çул-йĕр лабораторийĕн специалисчĕсем республикăри асфальт сарнă çулсен çиелти сийĕ пахалăх енĕпе нормативa тивĕçтернипе тивĕçтерменнине тĕрĕслессине йĕркеленĕ. Малтанлăха çакна валли çул-йĕрĕн икĕ объектне палăртнă. Кусем вĕсем пирĕн район территорийĕнчи регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан «Атăл – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар пристанĕ» автомобиль çулĕ тата кӳршĕллĕ Етĕрне районĕнчи «Никольски – Чиркăкасси – Калинин» автомобиль çулĕ.

Асфальтпа бетон сийĕн пробисене илнĕ ĕнтĕ, халĕ тĕрĕслев ĕçсен пыраççĕ.

**Укçа-тенкĕ**

## Минимум – 6226 тенкĕ

Чăваш Республикинче пурăнакансен 2013 çулхи иккĕмĕш кварталти пурăнма кирлĕ минимум виçине палăртнă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан вăл 4,4 процент ӳснĕ, 6226 тенкĕпе танлашнă. Укçа çине куçарас пулсан ӳсĕм виçи 265 тенкĕ пулать.

Çынсен социаллă тата демографи ушкăнĕсемпе илес пулсан пурăнма кирлĕ минимум виçи кăçалхи иккĕмĕш квартала ĕçлеме пултаракан çынсен 6603 тенкĕ (4,9 процент е 312 тенкĕ ӳснĕ), пенсионерсен 5167 тенкĕ (3,2 процент е 162 тенкĕ), ачасен 6162 тенкĕ (3,7 процент е 219 тенкĕ) пулнă.

# Тупăшсем ÿсни – лайăх кăтарту

Бюджет ыйтăвĕсемпе

***Августăн 2-мĕшĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 27-мĕш ларăвĕ иртнĕ пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Ытти ыйтусемпе пĕрлех ларура депутатсем район бюджетне кĕртме сĕнекен хăшпĕр тÿрлетÿсемпе улшăнусем пирки те ыйтусем сÿтсе явнă. Вĕсем пирки эпĕ тĕпленрех район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхне Рената АНАНЬЕВĂНА калаçа пама ыйтрăм.***

– Малтанах çавна каласа хăварасшăн. Депутатсен районти Пухăвĕн иртнĕ ларăвĕнче район бюджетне кĕртнĕ улшăнусем кăçал виççĕмĕш ĕнтĕ. Пурте вĕсем район бюджетне тупăшсем ытларах пырса кĕнĕ май хăш-пĕр кăтартусем енĕпе пысăкрах цифрăсем палăртассипе çыхăннă. Тупăшсем ÿснине ырламалла кăна. Апла пулсан тĕрлĕ ĕçсем пурнăçлама, çынсен пурнăç шайне ÿстерме те майсем ытларах.

Район бюджетне кăçалхи пĕрремĕш çур çулта мĕнле пурнăçлани пирки кĕскен чарăнса тăрас килет. Муркаш районĕн пĕтĕмĕшле тупăшĕ 232,1 млн тенкĕпе танлашрĕ. Вăл шутран район хăй пухнă тупăш виçи 77,4 млн тенкĕ е çулталăк планĕн 50,5 проценчĕ. Ку кăтарту иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 22,2 процент ÿсрĕ. Çак тапхăртах каялла тавăрса памалла мар укçа-тенкĕ район бюджетне 154,7 млн тенкĕ килнĕ ĕнтĕ. Ÿсĕм – 4,7 процент.

Хамăр тупăшсен тĕп пайĕ вăл НДФЛ пулса тăрать. Тупăшра унăн шайĕ 71,3 процент. Пурлăхпа усă курнинчен тата арендăна тÿлевĕнчен илнĕ тупăш 14 процент тата пĕтĕмĕшле тупăшран илнĕ налук 7,5 процент. Çаксем хамăр тупăшăн пĕлтерĕшлĕрех çăл куçĕсем пулса тăраççĕ.

Тĕрлĕ çăл куçсенчен хамăр пухакан тупăш виçи пур енĕпе те ÿссе пыни палăрать. Налук тупăшĕсем пухăнасси иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 15,9 процент, налукпа çыхăнман тупăшсем пухăнасси 62,4 процент ÿсрĕ.

Хамăр ытларах тупăш пухни тата республика бюджетĕнчен тĕллевлĕ ассигнованисем уйăрни район бюджетне унччен икĕ хутчен ÿсĕмпе çыхăннă тÿрлетÿсем кĕртме май пачĕ те. Хальхи виççĕмĕш улшăну район бюджетне тĕллевлĕ майпа каялла тавăрса памалла мар татах 42,2 млн тенкĕ уйăрнипе тата хамăр тупăш пухассине унччен планпа пăхнинчен 3,6 млн тенкĕ чухлĕ ÿстернипе çыхăннă. Тĕллевлĕ укçатенкĕ район бюджетне чи малтанах программăна кĕнĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме (5,6 млн тенкĕ), çавăн пекех аварийлĕ çурт-йĕрте пурăнакан 20 çемьене çĕнĕ çурт-йĕрпе тивĕçтерме (14,9 млн тенкĕ) килмелле. Кунсăр пуçне муниципалитет служащийĕсен, бюджет сферин ĕçченĕсен уйрăм категорийĕсен ĕç укçине тапхăр-тапхăр ÿстерсе пымаллине те шута илнĕ.

Район бюджечĕ кăçалхи çул валли пуçласа йышăннинчен 103 млн тенкĕ чухлĕ (26 процент) ÿсрĕ, паянхи куна 497,4 млн тенкĕпе танлашать. Палăртрăм ĕнтĕ, ку вăл ытларах каялла тавăрса памалла мар укçа-тенкĕ уйăрнипе çыхăнчĕ (84 млн тенкĕ). Ытти – хамăр тупăша ÿстерме май пулнипе çыхăннă расхутсен.

Бюджет хутшăнăвĕсенче халĕ пулса иртекен улшăнусене те асăнса хăвармалла. Чăваш Ен Раççей Федерацийĕн «Электронлă бюджет» проектне пурнăçа кĕртессипе пилот субъекчĕ пулса тăрать. Республикăпа пĕрле эпир те çак проекта пурнăçа кĕртме хутшăнатпăр. Унăн пĕрремĕш тапхăрĕ 2012 çулта вĕçленчĕ. Çапла вара района Чăваш Ен Фининс министерствин пĕрлехи базине кĕртнĕ. Кăçал вара муниципалитет учрежденийĕсенчен бюджет тата бухгалтери отчечĕсене пухассин, пĕрлештерессин ыйтăвĕпе ĕçлемелле пулать. Ку енĕпе эпир юлашки вăхăтра районти учрежденисен бухгалтери службисемпе япăх мар ĕçлерĕмĕр, çапла вара августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пирĕн района ЧР Финанс министерствин пĕрлехи серверĕпе àнăçлă çыхăнтарнă.

Ку ĕç çитес çул та пулса пымалла. 2014 çулта бюджетсене планлассин ĕçĕ-хĕлĕпе методикине çĕнетсе улăштарассипе ытларах ĕçлемелле пулĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

# Чăваш Ен пенсионерĕсен – хăйсен кабинечĕсем

Пĕрлехи портал услугисем

***Чăваш Ен пенсионерĕсем патшалăх услугисемпе Интернет урлă усă курма вĕренеççĕ. Пĕр уйăх çурă вĕреннĕ хыççăн августăн 1-мĕшĕнче «Бабушка-онлайн» тата «Дедушка-онлайн» курссене çÿрекенсен юлашки урок иртнĕ. Ку хутĕнче ватă çынсем патшалăх услугисен пĕрлехи порталне алла илнĕ. Вĕсене Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин тата Наци библиотекин сотрудникĕсем пулăшнă.***

Специалистсен инструкцийĕсене тĕпе хурса асаттесемпе асаннесем умри задачăсене пурнăçлама пултарнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсемшĕн «логин», «пароль», «браузер», «аккаунт», «скайп» терминсем çĕнĕлĕх мар. Кашнийĕнех хăйĕн электрон почти, социаллă сетьсенче страници пур. Хаваспах юлташĕсемпе хутшăнаççĕ.

Надежда Соганова курссене хăй кăмăлĕпех пынă. Ачисемпе мăнукĕсем Интернетпа çăмăллăн усă курнине сăнанă май унăн хăйĕн те компьютер умне ларас килсе кайнă. 71 çулхи пенсионеркăна çĕнĕлĕх алла илме пĕр уйăх çурă çителĕклех пулнă.

Аса илтеретпĕр: хальхи вăхăтра Чăваш Енре пурăнакансем патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче электрон мелĕпе патшалăхăн регион тата муниципалитетăн 69 йышши услугипе усă курма пултараççĕ. Çавна валли порталта регистрациленмелле, код илнĕ хыççăн харпăр хăйĕн кабинетĕнче ĕçлеме пуçăнмалла.

2013 çулхи пĕрремĕш çур çулта компьютер ăсталăхĕн курсĕсенче 122 çын вĕреннĕ. Наци библиотекин специалисчĕсен даннăйĕсем тăрăх вĕренекенсен ватам ÿсĕмĕ 62 çулпа танлашнă. Çав вăхăтрах вĕренекенсем хушшинче 80 çул урлă каçнисем те пур.

Жеребьевка

**от 05 августа 2013 года**

**ПРОТОКОЛ**

**жеребьевки, проводимой Моргаушской ТИК в целях распределения печатной площади для размещения на безвозмездной основе предвыборных агитационных материалов кандидатов на должность главы Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

В проведении жеребьевки приняли участие:

- Тарасова Л.Ю. – председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии;
- Леонтьев Г.В. – член Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса;
- Петров В.В. – член Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса.

В соответствии с главой 7 Федерального Закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и главой 6 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» предоставляет зарегистрированным кандидатам по досрочным выборам на должность главы Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики равный объем печатной площади и устанавливает порядок публикации предвыборных агитационных материалов.

В соответствии с избирательным законодательством, общий минимальный объем площадей, выделяемых под агитационный материал, должен составлять не менее 10 процентов от общего объема разового выпуска печатного издания, при этом не менее 40 процентов печатной площади должно предоставляться безвозмездно. В период проведения предвыборной агитации с 10 августа 2013 года по 6 сентября 2013 года выйдет 7 номеров газеты ( 6 номеров – в августе, 1 номер – в сентябре т.г.). Объем печатной площади, выделяемый на безвозмездной основе каждому зарегистрированному кандидату, составляет 280 квадратных сантиметров.

Жеребьевка по предоставлению печатной площади на безвозмездной основе в газете «Çĕнтерÿ ялавĕ» определила следующий порядок размещения печатных агитационных материалов:

| № п/п | Ф.И.О. кандидата | Дата выхода номера газеты | Распределение кандидатов |
|---|---|---|---|
| 1 | ВАСИЛЬЕВ ЭДУАРД МИХАЙЛОВИЧ | 17 августа 2013 г. | № 4 |
| 2 | КОНДРАТЬЕВА ТАТЬЯНА ПЕТРОВНА | 17 августа 2013 г. | № 6 |
| 3 | ЛЕДЕНЦОВ БОРИС ЮРЬЕВИЧ | 17 августа 2013 г. | № 1 |
| 4 | ЛЯЧЕНКОВ ВЛАДИМИР МИХАЙЛОВИЧ | 17 августа 2013 г. | № 2 |
| 5 | СЕРГЕЕВА НАТАЛИЯ ВАСИЛЬЕВНА | 17 августа 2013 г. | № 3 |
| 6 | ЧАЛЕНКО ЕВГЕНИЙ ВИКТОРОВИЧ | 17 августа 2013 г. | № 5 |

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2013 çулхи июлĕн 11-мĕшĕнчи 740 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Потребительсен кооперацийĕн системинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Любовь Димитриевна САПОЖНИКОВĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти «Шуçăм» кафе аслă кондитерне;

– **Елена Германовна СОЛОВЬЕВĂНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн Хыркасси магазинĕн заведующине;

– **Анна Вячеславовна СУВОРОВĂНА**, Мăн Сĕнтĕрти «Стройхозтовары» магазин сутуçине;

– **Любовь Михайловна ОГНЕВĂНА**, Мăн Сĕнтĕр райповĕн Тренккă магазинĕн заведующине.

2. Районта пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарма тÿпе хывнăшăн:

– **Рената Валериановна ПАВЛОВĂНА**, В.А. Кузьмина предпринимателĕн «Экономь» парикмахерскин парикмахерне;

– **Раиса Евстфьевна СМИРНОВĂНА**, уйрăм предпринимателе.

# Энергоресурссемпе усă курнине пĕтĕмлетрĕç

Бюджетпа перекетлĕ те пĕлсе усă курасси – район администрацийĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри, çав шутрах çак ĕçе тăтăшах тĕрĕслесси те. Çавна май район бюджетĕнчен уйăракан укçа-тенкĕпе епле ĕçленине тишкерес тесе çултталăкра икĕ хутчен вĕсенчен отчетсем пухаççĕ, пĕтĕмлетеççĕ, пĕтĕмĕшле усă курнине уйăрнă лимитпа танлаштараççĕ.

Çапла вара районта асăннă ĕç-хĕле йĕркелерĕç. Кăçалхи пĕрремĕш çур çула пĕтĕмлетнинчен çакă курăнчĕ. Район бюджетĕнчен финанслакан организацисем 1815 пин киловатт электроэнерги кайнă е çакă 7 миллион та 503 пин тенкĕлĕх пулнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан 37 пин киловатт электроэнерги ытларах кайнă.

Ăшă энергийĕ асăннă тапхăрта 4146 ГКл е 5 миллион та 58 пин тенкĕлĕх пулнă, иртнĕ çулхинчен 997 ГКл чухлĕ сахалрах. 1358 пин кубла метр е 6232 пин тенкĕлĕх газ тăкакланă. Иртнĕ çулхинчен 121 пин кубла метр чухлĕ сахалрах.

Çапла вара асăннă бюджетпа усă куракансем кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 18 миллион та 793 пин тенкĕлĕх (иртнĕ çулхинчен 153 пин тенкĕлĕх сахалрах) топливăпа энергетика ресурсĕсене тăкакланă.

Конкурс

# Тăваттăмĕш хут иртет

Раççей Федерацийĕн Вырăнти хăй тытăмлăх тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх политикин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен общество палатин комиссийĕ пулăшнипе «Председатель ТСЖ» журнал Пĕтĕм Раççейри «Мой дом – моя забота» литературăпа художество конкурсне тăваттăмĕш хут ирттерет.

Унăн тĕллевĕ – çынсен юлташла хутшăнăвĕсене пырса тивекен литературăпа художество пултарулăхне пулăшасси.

Конкурса хутшăнакансем заявка парса хăйсене «Соседи», «Творить, создавать, жить», «Общественный контроль в сфере ЖКХ», «Лифт: качество, комфорт, надежность!» тата «Телевидение будущего» номинацисенче тĕрĕслесе пăхма пултараççĕ.

Кăçал пуçласа конкурса поэтсем кăна мар, прозаиксем те хутшăнма пултараççĕ. Конкурс материалĕсем конкретлă номинацие тивĕçтермелле. Унта автор хушамачĕпе ятне тата ашшĕ ятне, çыхăнмалли телефон номерне, e-mail кăтартмалла.

Конкурса материалсене электрон почтипе кăна йышăнаççĕ. Унăн адресĕ: prtsj@mail.ru. Материалсене 2013 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕччен ярса памалла, «На конкурс» тесе кăтартмалла.

# «Эпĕ кунта пулнă»

Акционерсен «Ростелеком» усă обществи пултарулăх ĕçĕсен «Эпĕ кунта пулнă» («Я тут был») конкурсне ирттерет. Унта Атăлçи федераци округĕн регионĕсенче пурăнакансем пурте хутшăнма пултараççĕ. Конкурсăн тĕп тĕллевĕ – регионти пурте пĕлмен объектсене тĕпчесси, туризмпа канăвăн çĕнĕ çул-йĕрне шырасси.

Конкурса регионти интереслĕ вырăнсем пирки хăйне евĕр текст тата сĕн ÿкерчĕксен материалĕсене йышăнаççĕ. Вĕсем пуриншĕн те паллă, туристсемпе курса çÿрекенсем лайăх пĕлекен вырăнсем пулмалла мар. Файл калăпăшĕ 10 Мб ытла ан пултăр.

«Эпĕ кунта пулнă» конкурса хутшăнас тесен унăн положенийĕпе паллашмалла, формăна тултармалла та ĕçе конкурс сайтне вырнаçтармалла. Заявкăсене сентябрĕн 16-мĕшĕччен йышăнаççĕ, конкурса сентябрĕн 30-мĕшĕнче пĕтĕмлетеççĕ. Жюри кашни регионран пĕрер çĕнтерÿçĕ палăртать. Вĕсем дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçеççĕ.

Тулли информацие «Я тут был» конкурсăн официаллă сайтĕнче вырнаçтарнă.

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăр – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Анфиса Спиридоновна НИКОЛАЕВА** паян, августăн 7-мĕшĕнче, 75 çул тултарчĕ.

Çак сумлă юбилейпа саламласа сана çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Турри сана пулăшсах тăтăр, чир-чĕре айккине сиртĕр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм килтĕр. Эсĕ пирĕнпе юнашар пулнишĕн эпир савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр.

**Ăшă салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, хăтитăхлачисем.**



Çатракасси ялĕнче пурăнакан юратнă кĕрÿ, мăшăр, кукаç, тарават хăта, атте, ырă кăмăллă тăван – **Виталий Наумович СМИРНОВ** çак кунсенче 60 çул тултарчĕ. Юбилей ячĕпе эпир ăна чĕререн савса ăшшăн саламлатпăр, пире тахтах нумай çул савăнтарса пурăнма вăйхал, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. «Свобода» хуçалăхра 1977 çултанпа вăй хурса ĕçлет. 1991 çулта юратнă аттемĕр ферма заведующийĕнче ĕçлеме пуçларĕ, çак фермăрах вăй хурса ĕçлекен юратнă мăшăрĕпе Любовь Ивановнăпа вĕсем 4 ача ÿстерсе пурнăç çулĕ çине тăратрĕç. Эсĕ пурри – пирĕншĕн нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Турри сана вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр.

**Салампа: хунямăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрÿвĕсем, кинĕ, 8 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**



Пирĕн юратнă, хаклăран та хаклă йăмăка, мăнака – Мăн Шашкар ялĕнче пурăнакан **Лидия Тимофеевна ВАСИЛЬЕВĂНА** 53 çул тултарнă ятпа çав тери хисеплесе ăшшăн саламлатпăр. Мăнаçлă Атăл шывĕн çулĕ евĕр вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Турри сана вăйхал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр.

**Саламлаканĕсем: аппăшĕпе йыснăшĕ тата вĕсен ачисем Рита, Таня, кĕрÿшĕ Саша, аппăшĕн мăнукĕсем Антонпа Аня.**



Хаклă та юратнă çыннăмăра – Йÿçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Анатолий Константинович КИРИЛЛОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу усăллăсах пытăр, ĕмĕрÿ вăрăм пултăр. Çемьере яланах тату пурнăç хуçалантăр. Юратупа килĕшÿ пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма, ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртме пулăшса пычăр, вăй-хал паччăр. Инкек-синкек сирĕнтĕн аякран ирттĕр. Телейлĕ пулăр.

**Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, икĕ ывăлĕ, Кирилловсен, Андреевсен, Егоровсен çемйисем.**

# 40 çул пĕр вырăнта

Сывлăх хуралĕнче



***Ĕçе чунĕпе парăннă çынна пĕрре пăхсах пĕлме пулать. Мăн Сĕнтĕр больницинчи терапи уйрăмĕн медицина сестри Маргарита Пайкова – çавăн пек ĕçченсенчен пĕри. Тăвату теçетке çул каялла Шупашкарти медицина училищинчен вĕренсе тухнă çамрăк специалист Мăн Сĕнтĕр больницине килсе вырнаçнă та ĕç вырăнне улăштарасси пирки шутламан. Врач хушнисене вăхăтра пурнăçласа вуншар-çĕршер çын сывлăхне тĕреклетме, чирлисене ура çине тăма пулăшнă, пурнăç илемне туйма вĕрентнĕ. Ĕçчен медсестра ача çуратмалли уйрăмра 24 çул ĕçленĕ хыççăн хирурги тата неврологи уйрăмĕсенче те сахал мар вăй хунă. Халĕ вара Маргарита Викторовна 5-мĕш çул терапи уйрăмĕнче тăрăшать.***

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

# Çăмламас тусăмăрсем сиен кӳме те пултараççĕ

Тимлĕ пулăр

Пĕчĕк чухне йытă е кушак туянса пама ыйтман ача пур-ши? Пурин ашшĕ-амăшĕ те тĕпренчĕкĕн кăмăлне тивĕçтерейместь паллах. Çапах нумайăшĕн килĕнче мăр-мăр е çăмламас ытти чĕр чун пур. Тепĕр тесен психологсем тăвату уралла тусăмăрсем ача-пăчашăн савăнăç кăна мар, усăллă пулнине те çирĕплетеççĕ. Вĕсем ача аталанăвне ырă витĕм кӳреççĕ теççĕ. Пĕччен çынсене вара кичемлĕхпе кĕрешме пулăшаççĕ-тĕр. Апла пулин те юратнă чĕр чунсем хуçисене тĕрлĕ чир ертме пултарни пирки те манмалла мар.

Роспотребнадзор пĕлтернĕ тăрăх республикăра пĕлтĕр, сăмахран, 3273 çын чĕр чунсем çыртнипе шар курнă. Çав шутра 17 çула çитменнисем те пур – 917-ĕн. Тискер чĕр чунсем çыртнă тĕслĕхсем сахал маррине палăртаççĕ – 43 (çул çитмен 11 ача). Телее, чĕр чунсенчен урнă чирĕ ернĕ тĕслĕх пулман.

Анчах та ӳт кĕçĕтнипе аптăранă çынсен шучĕ пысăк. Пĕтĕмпе асăннă тапхăрта 423 çын (200 ача) тухтăртан çак амакран хăтăлма пулăшу ыйтнă. Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн патшалăх инспекторĕ Светлана Чернова ăнлантарнă тăрăх ку чир ытларах чухне шăпах кушаксенчен ерет. Çавăнпа та çăмламас тусăр ниçта кайса кĕмелле мар хыçкаланнине, кĕлетки çинче хĕрлĕ паллăсем пуррине асăрхасанах пĕр тăхтаса тăмасăр ветеринар патне васкамалла.

Анлă сарăлнă тепĕр чир – лишай – вара 899 çынна канăçсăрлантарнă. Трихофитоз тата микроспорум текен кăмпасенчен аталанакан мур иммунитет хавшанă çынсене ытларах тапăнать. Çавăнпа та чирлĕ чĕр чунтан уйрăмах ачасен тата ватăсен асăрханмалла. Сăмах май, паянхи кун микроспорие çăмăллăнах сиплеççĕ, кăмпасемпе кĕрешекен тĕрлĕ маç пулăшĕ.

Гельминтоз чирне аталанма пулăшакан хуртсем те çынсемсемшĕн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Вĕсем кашни чĕр чунрах пур тесен те юрать. Ку амакпа аптăрасран кашни 3 уйăхра шĕвĕрĕлченсене пĕтерекен эмеле хăвăрăн кăна мар, çăмламас тусăра ĕçтерсен те аван. Пĕлтĕр çак йышри токсокароз текен хуртсем ертнĕ 64 (36 ача) тĕслĕх пулнă. Эхинококкоз хуртсем шар кăтартнă тĕслĕхсене те 3 шута илнĕ.

Кусемсĕр пуçне фелиноз та куçма пултарать. Ку бактери кушак çăварĕнче пурăнать, чĕр чуна хăйне нимле те канăçсăрлантармасть. Пĕчĕк кăна чăрмаланчăк пулсан та чир аталанаять. Малтанах çак вырăнта хăмпă ӳссе ларать, кайран вăл çурăлать. Чир юна тата шалти органсене куçать. Температура ӳсет, лимфа тĕввисем ӳсеççĕ. Кун пек чухне ăш пăтранни те, ывăнни те, сив чир те пулать.

Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх йывăр çынсемшĕн уйрăмах кушаксенчен куçма пултаракан токсоплазмоз хăрушă. Тăвату уралла чирлĕ тусăр çулласа илни те çителĕклĕ. Кушаксем вара чирлĕ выльăх какайне çисен аптăраса ӳкеççĕ. Ку мура çаклатнă хĕрарăмăн хырăм ӳкме е вилĕ пепке çуралас шиклĕх пур. Асра тытăр: какая нумайччен вĕретмелле, кушака ветеринар патне илсе кайса тĕрĕслеттерсех тăмалла. Юратнă чĕр чунăрсене прививка тăвассине, харпăр хăй гигиена правилисене пăхăнассине йăлана кĕртсен чир-чĕртен çăлăнас шанăç пур.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕ.**

**Продаю колодезные кольца, бордюры, поребрики. Бурение колодцев, отверстий, установка опор ЛЭП и др. Тел.: 8-927-668-96-96, 8-917-659-60-60. 2-13.**

**ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ.**
**Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51. 6-21.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.**
**Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 1-10.**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 15-22.**

## Прогноз погоды

| | среда 7 августа | | | | четверг 8 августа | | | | пятница 9 августа | | | | суббота 10 августа | | | | воскресенье 11 августа | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +14 | +19 | +22 | +16 | +15 | +19 | +21 | +16 | +14 | +20 | +23 | +17 | +14 | +22 | +25 | +18 | +15 | +23 | +26 |
| Давление мм | 746 | 746 | 746 | 746 | 746 | 747 | 746 | 747 | 747 | 747 | 747 | 747 | 747 | 747 | 747 | 746 | 745 | 746 | 745 |
| Влажность % | 81 | 56 | 48 | 75 | 75 | 61 | 44 | 69 | 83 | 61 | 48 | 84 | **96** | 63 | 43 | 81 | **92** | 71 | 44 |
| Ветер м/сек | 3 | 6 | 7 | 3 | 4 | 5 | 7 | 3 | 3 | 5 | 6 | 2 | 2 | 3 | 4 | 2 | 3 | 4 | 6 |
| | С | С | С | С | С | С | С | С | С | С | С-В | С-В | С-З | С | С | З | З | С-З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 05:09 | 20:47 | | | 05:11 | 20:45 | | | 05:13 | 20:43 | | | 05:15 | 20:40 | | 05:17 | 20:38 | |
| Луна восход / заход | | 05:54 | 20:18 | | | 07:04 | 20:37 | | | 08:16 | 20:56 | | | 09:28 | 21:14 | | 10:43 | 21:34 | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:230701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иванова Любовь Валериановна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Ятманкино, ул. Мокрая, д. 3.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:230701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**Продается косилка Л-501-01 в хорошем рабочем состоянии и ходоуменьшитель на МТЗ.**
**Тел.: 8-927-995-45-36.**

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 12-20.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-10.**

**В связи с открытием АЗС требуется персонал: операторы, заправщики, дворники, уборщицы. Стабильная компания, достойная заработная плата. Тел.: 69799. 2-2.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 18-25.

**На АЗС Сиб-Нефть требуется наполнитель газовых баллонов. Сменный режим работы, достойная заработная плата. Тел.: 69799. 2-2.**

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 10-10.**

**Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Техноников»; гипсокартон – 185 руб.; фанеру влагостойкую 9 мм; профнастил оцинк., профнастил крашеный; сухие смеси, цемент М-400, М-500; сайдинг; двери, поликарбонат, деревянную вагонку. Тел.: 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 5-10.**

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), асфальт. Возможна доставка.**
**Тел.: (8352) 574281,573383, 8-903-358-36-23. 8-8.**

* * *

**Тăхăр уйăхри хура-шурă тынашка сутатăп.**
**Тел.: 8-908-306-81-46.**

* * *

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 6-10.**

* * *

**Продаю ОПГС (гравмасса), песок.**
**Тел.: 8-905-199-69-33. 12-19.**

* * *

**Продаю пшеницу нового урожая.**
**Тел.: 8-906-383-47-12.**

* * *

**Фермăра ĕçлеме ТĔРЛĔ ĔÇ ПУРНĂÇЛАКАНСЕМ, ЭЛЕКТРИК васкавлă кирлĕ. Ĕç укçи вăхăтра тӳлетпĕр. Ĕç кĕнекипе йышăнатпăр. Кĕрекаç ялĕ. Тел.: 8-987-674-72-84. 2-5.**

* * *

**Тюкланă кăçалхи утă сутатпăр, леçсе паратпăр.**
**Тел.: 8-906-385-43-33. 2-2.**




* * *

**Çур çулхи ăратлă качака путеккисене сутатăп. Тел.: 8-965-688-56-36. 2-2.**

* * *

**Продается земельный участок 20 соток под строительство дома. Все коммуникации (газ, вода, электричество) рядом. Асфальтированная дорога, остановка рядом. Цена двести тысяч рублей. Тел.: 8-927-842-92-45.**

* * *

**Куçарса каймалли çирĕп йывăç пӳрт (12мх6м) сутатăп. Тел.: 8-927-857-32-76.**

* * *

**Ремонт стиральных машин-автоматов. Быстро. Качественно. Гарантия. Тел.: 8-927-842-07-05, 38-58-45.**

* * *

**Вăкăрсем, пăрусем, сурăх-така туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.**

* * *

**Салон мягкой и корпусной мебели предлагает мебель для гостиной, спальных комнат, шкафы-купе, детскую мебель, наборы мягкой мебели, межкомнатные и металлические двери, фурнитуру к ним. Мы также изготавливаем мебель на заказ. Адрес: с. Моргауши (здание бани). Тел.: 8-965-686-08-96. 1-4.**

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши. Цена договорная. Тел.: 8-909-305-29-40.**

* * *

**Куплю коров, бычков, овец.**
**Тел.: 8-927-850-85-64. 1-2.**

* * *

**Продается квартира. Тел.: 8-903-535-53-19. 1-2.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 06.08.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4749.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.